АСĂНУ

Валентина Ярмуш

# ПУШАНЧĔ ЧЕЧЕКЛĔ ТĔНЧЕ...

*Чăвашсен паллă художникне*
*Элли Юрьева асăнса.*

Çăлтăр пек çуталса вăл вĕçетчĕ çÿлте.
Хăш чухне çĕр çине таврăнатчĕ çĕрле.
Юрату хĕлхемне тутанса киленме,
Ал çине çĕклесе тĕнчене пĕлтерме.

Чĕринчен тумласа хĕрлĕ юн юхнă чух
Йышăнатчĕç ăна ялтăра сăрă пек.
Тăлăх чун ыратса кăшкăрса йĕнĕ чух
Шăранса илтĕнетчĕ çынна - юрă пек.

Тен, нумай вĕçнĕрен, çул çухатрĕ çĕрле,
Шыраса тупаймарĕ ăна кÿлĕре.
Тĕссĕр шыв, ÿсĕр хум хупăрлать тĕттĕмпе,
Кĕске çул «ниçталла» илсе кайрĕ пĕрле.

Тăрăрах кÿлĕре кимĕпе чÿхенсе
Ишмеллеччĕ паян хумсене çĕнтерсе.
Ÿкерсе пĕтермен сăнарсем хут çинче...
Пушанса тăрса юлчĕ чечеклĕ тĕнче.